ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН
САККУНЕ

ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН "ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИНЧЕ ВЫРĂНТИ ХĂЙ ТЫТĂМЛĂХ ОРГАНӖСЕНЕ ПАТШАЛĂХĂН УЙРĂМ ПОЛНОМОЧИЙӖСЕНЕ ПАРАССИ ÇИНЧЕН" САККУННЕ УЛШĂНУСЕМ КӖРТЕССИ ÇИНЧЕН

Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕ
2023 çулхи утă уйăхĕн 6-мĕшĕнче
йышăннă

1 статья

Чăваш Республикин "Чăваш Республикинче вырăнти хăй тытăмлăх органĕсене патшалăхăн уйрăм полномочийĕсене парасси çинчен" 2006 çулхи чӳк уйăхĕн 30-мĕшĕнчи 55 №-лĕ саккунне (Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн ведомоçĕсем, 2006, 72 №; 2007, 73, 74 №-сем; 2008, 76 №; 2009, 80, 82 №-сем; 2010, 84, 85 №-сем; 2011, 90, 91 №-сем; 2012, 92 (I том), 94 №-сем; "Республика" хаçат, 2012, юпа уйăхĕн 5-мĕшĕ, раштав уйăхĕн 29-мĕшĕ; Чăваш Республикин Саккунĕсен пуххи, 2013, 5, 6, 12 №-сем; 2014, 5, 6, 11 №-сем; 2015, 12 №; 2016, 10, 12 №-сем; 2017, 3, 7 №-сем; "Республика" хаçат, 2017, чӳк уйăхĕн 8-мĕшĕ, раштав уйăхĕн 13-мĕшĕ; 2018, çу уйăхĕн 8-мĕшĕ, çĕртме уйăхĕн 27-мĕшĕ, авăн уйăхĕн 19-мĕшĕ; 2019, пуш уйăхĕн 6-мĕшĕ, пуш уйăхĕн 13-мĕшĕ, çу уйăхĕн 15-мĕшĕ, утă уйăхĕн 17-мĕшĕ, раштав уйăхĕн 26-мĕшĕ; 2020, ака уйăхĕн 29-мĕшĕ, çу уйăхĕн 13-мĕшĕ, авăн уйăхĕн 30-мĕшĕ, юпа уйăхĕн 28-мĕшĕ; 2021, ака уйăхĕн 30-мĕшĕ, çу уйăхĕн 26-мĕшĕ, юпа уйăхĕн 27-мĕшĕ, раштав уйăхĕн 29-мĕшĕ; 2022, ака уйăхĕн 6-мĕшĕ, çу уйăхĕн 5-мĕшĕ, утă уйăхĕн 13-мĕшĕ, авăн уйăхĕн 28-мĕшĕ, юпа

уйăхĕн 5-мĕшĕ; "право21.рф" сеть кăларăмĕ, 2022, чӳк уйăхĕн 21-мĕшĕ, 0000000000000244 №; "Республика" хаçат, 2022, раштав уйăхĕн 22-мĕшĕ, раштав уйăхĕн 28-мĕшĕ; "право21.рф" сеть кăларăмĕ, 2023, нарăс уйăхĕн 16-мĕшĕ, 0000000000000736 №, нарăс уйăхĕн 22-мĕшĕ, 0000000000000760 №) çакăн пек улшăнусем кĕртес:

1) 1 статьян 1-мĕш пайĕн 12-мĕш пунктĕнче:

а) пĕрремĕш абзацра "(хутса ăшăтнăшăн, ăшăпа тивĕçтернĕшĕн, çав шутра кăмакапа ăшăтмалли çуртсене хутма хытă топливо кӳрсе панăшăн тата электричествăпа тивĕçтернĕшĕн)" сăмахсене "(электричество энергийĕшĕн, ăшă энергийĕшĕн, хутмалли кăмака пур чухне хытă топливăшăн)" сăмахсемпе улăштарас;

ă) тăваттăмĕш абзацра "тата кинематографи" сăмахсене кăларса пăрахас;

2) 14^{10} статьян 2-мĕш пайĕн тăххăрмĕш – вун пĕрмĕш абзацĕсенче "тата кинематографи" сăмахсене кăларса пăрахас;

3) 17 статьян 1-мĕш пайĕн 9-мĕш пунктĕнче "тата кинематографи" сăмахсене кăларса пăрахас.

2 статья

Çак Саккун ăна официаллă йĕркепе пичетлесе кăларнă кунран пуçласа вăя кĕрет.

Чăваш Республикин
Пуçлăхĕ – О.Николаев

Шупашкар хули
2023 çулхи утă уйăхĕн 7-мĕшĕ
55 №